Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

25 (7769) № ✻ Юн кун, 2010 çулхи апрелĕн (ака) 7-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

**Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа 65 çул çитнĕ май**

## Вĕсем Çĕнтерĕве çывхартнă



*Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Николай Якимович Васильев – Мулкачкасси ялĕнчен. 1926 çулта çуралнă. 1943 çулта ăна çар ретне илнĕ. 1948 çулта кăна киле таврăннă вăл. Инçет Хĕвел Тухăçĕнче службăра пулнă. Арми штабĕнче службăра тăнă. Аслă сержант вăрçă çулĕсенчи хăюлăхпа хастарлăхшăн орденсемпе медальсене чылай тивĕçнĕ. Нумай пулмасть вара вăл Оринин ял тăрăхĕн территорийĕнче район администрацийĕн кунне ирттернĕ май Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа 65 çул çитнине халалланă юбилей медальне тивĕçрĕ.*

**В. ШАПОШНИКОВ**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**

**Спорт тата сывă пурнăç йĕрки**

## Пысăк спорта – массăллă ăмăртусем урлă

Иртнĕ эрнере районти физкультура активĕн ларăвĕ хăйĕн ĕçне анлăн та тарăннăн ирттерчĕ. Унта физкультура учителĕсем, тренер-преподавательсем, районти вĕрентӳ учрежденийĕсен директорĕсем çеç мар, районти спорт федерацийĕсен ертӳçисем, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем, тĕрлĕ шайри депутатсемпе медицина ĕçченĕсем те хутшăнчĕç. Чăваш Республикин физкультура, спорт тата туризм министрĕн çумĕ С.В. Мельников Муркаша килсе çитни те, ларăва район пуçлăхĕ Ю. Иванов ертсе пыни те физкультурăпа спорт аталанăвĕн ыйтăвĕсем пурне те пырса тивнине çирĕплетеççĕ.

Çынсене вырăнсенче массăллă физкультура тата спорт занятийсене явăçтарасси тавра калаçмалли, сӳтсе явмалли чылай пулчĕ. Районта пĕлтĕр физкультурăпа сывлăха çирĕплетес тата спортпа массăллă ĕç епле пулнипе район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – А.Е.Андреева хăйĕн докладĕнче паллаштарчĕ. (Ред.: тĕплĕнрех – çитес номерсенче.) Алевтина Евстафьевна районта физкультурăпа спорта аталантарас ĕçре спорт сооруженийĕсемпе эффективлă усă курассинчен пуçласа çак енĕпе ĕçлекен специалистсен пысăк тӳпи таранах тишкерӳ туса пачĕ.

Районти спорт пурнăçĕпе тачă çыхăннă ытти çынсем тухса калаçнинчен акă мĕн курăнчĕ. Шкулсенчи спорт залĕсене вырăнта пурăнакансене çӳреме ятарлă графиксем туса халăха пĕлтересси те (пĕрремĕш утăм!) хальлĕхе хытах уксахлатьха. Юнкăри вăтам шкулта вара спортзал çук. Ку, паллах, кая хăвармасăр татса памалли ыйту. Массăллă мероприятисем ирттерессине те ял тăрăхĕсенче йăлана кĕртсе тăтăш пурнăçламасан усси çукрах пулĕ. Пĕрре ирттерсе «эпир ирттертĕмĕр» тени мăнаçланса мухтанмаллиех мар-ха. Районти физкультурăпа спорт комплексне ялсенчен çӳреме майсем тупсан вара ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсемпе ытти ертӳçĕсем хăйсен ĕçĕнче пысăк «Ç» паллă çирĕппĕнех лартма пултараççĕ. Шел те, Муркашри физкультурăпа спорт комплексне паян шкул ачисем те япăх çӳреме пуçланă. Бассейн вара кунта кăна-ха районта. Ачасен нивушлĕ унта ишес килмест? Вĕсен шухăш-кăмăлне «шывра» путармалла мар пулĕ.

Ачасем тенĕрен, пĕчĕкренех пулас спортсменсене шыраса тупасси, хыççăн вĕсемпе тĕллевлĕ ĕçлесси – тренерсен чăн малтанхи ĕçĕ пулса тăрать. Апла пулсан вĕсен «халăха утмалла». Паллах, врачсем çырса панă пĕтĕмлетӳсене курмăш пулмалла мар. Физкультура урокĕсене ирттернĕ чухне те. Районти ăмăртусене Шупашкартан килекен тренерсем пĕрре мар: «Эпĕ ку ачана илсе каятăп», – тенине илтме тивнĕ. Районти спорт шкулĕсен тренерĕсен те çапла тума вăтанмалла мар. Кун пирки Чăваш Республикин физкультура, спорт тата туризм министрĕн çумĕ С.В. Мельников та аса илтерчĕ. Муркаш тăрăхĕ вара пысăк шая хăпаракан спортсменсем хатĕрлессипе яланах ырă енпе палăрса тăнă. Эппин, ку ĕçе те пăрахса ямалла мар. Спорт ăмăртăвĕ вара ăна ирттернĕ хыççăн «çунипе» вĕçленни пачах килĕшӳсĕррине палăртрĕ министр çумĕ.

**(Вĕçĕ 4-мĕш стр.).**

**Пĕчĕк предпринимательство кунĕнчен**

## «Район аталанăвĕ сирĕнтен нумай килет»

**Çак кунсенче районти Культура çуртĕнче пĕчĕк предпринимательство кунĕ пулчĕ. Чи малтанах пуçтарăннисем умĕнче район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов тухса калаçрĕ. Районăн кăçалхи 3 уйăхри социаллă пурнăçĕпе экономика аталанăвĕпе паллаштарнă май промышленноçра та, ял хуçалăх сферинче те иртнĕ çулхи çак вăхăтринчен кăтартусем пысăккине палăртрĕ. Ытти отрасльсем те йĕркеллĕ аталанса пыраççĕ.**

**– Районăн аталанăвĕ сирĕн ĕçĕртен нумай килет, – терĕ Юрий Александрович.**

### МАЛАЛЛАХ АТАЛАНАТЬ ПĔЧĔК БИЗНЕС

Ку чăннипех те çапла пулнине çак цифрăсем те çирĕплетсе параççĕ. Кăçалхи 3 уйăхра пĕчĕк формăллă предприятисем 40,9 миллион тенкĕлĕх тавар сутнă. Ку вăл пĕтĕм калăпăшăн 24 процентне пулать. Çак хушăра çĕнĕ 5 пĕчĕк предприяти уçăлнă. Çапла майпа тепĕр 12 çын валли ĕç вырăнĕ тупăннă. Тавар çаврăнăш планĕ иртнĕ çулхинчен 8 процент пысăкрах: 125,03 миллион тенкĕлĕх. Пĕтĕмĕшле таварçаврăнăшĕнче пĕчĕк предпринимательсен тӳпи 18,3 процентпа танлашать.

Пĕчĕк тата вăтам бизнеса аталанма районта условисем çителĕклĕ. Кăçалхи 3 уйăхра кăна пĕчĕк бизнес представителĕсен ыйтăвĕсене тивĕçтерме 3,8 миллион тенкĕлĕх тавар туяннă, ĕçсем тунă тата пулăшусем панă. Ку вăл тунă пĕтĕм контрактпа килĕшӳн 72 процентне пулать. Кредит илнĕ суммăн процент ставкине республика бюджетĕнчен саплаштаракан çăмăллăхпа районти пĕчĕк бизнесăн 7 представителĕ усă курать.

Иртнĕ çул ял хуçалăхĕнчи пĕчĕк бизнеса аталанма федераллă бюджетран 6061,2 пин тенкĕ, республика бюджетĕнчен 3700,5 пин тенкĕ укçа уйăрнă. Кăçалтан пуçласа пĕчĕк предпринимательствăри проектсене пурнăçа кĕртме çамрăк граждансене грантсем пама пуçларĕç. Çак тĕллевпе республика 900 пин тенкĕ укçа уйăрать. Апла пулсан районти пĕчĕк предприятисене мал туртăмлă пулма сăлтавсем те пур.

Ку çеç те мар. Пĕчĕк формăллă предприятисене аталантармалли муниципаллă программăсене пурнăçа кĕртес тĕллевпе предпринимательство ĕçне пуçăнакансене те грантсем парса пулăшаççĕ. Ку тĕллевпе пирĕн района республика бюджетĕнчен 100 пин тенкĕ уйăрма йышăннă.

Унсăр пуçне предпринимательсене консультаципе информаци парас тĕлĕшпе, йĕркелӳпе методика енĕпе те пулăшу кирлĕ. Ку ыйтусемпе вара районти Бизнес-инкубатор ĕçлет. Иртнĕ çул пĕчĕк бизнесăн 287 представителĕ çак пулăшупа усă курнă.

Пĕчĕк тата вăтам предприятисем тĕрлĕрен конкурссене те хастар хутшăнаççĕ. Республикăри «Çулталăкри чи лайăх предприниматель» конкурсра «Декор» чикĕллĕ яваплăхлă общество çĕнтерӳçĕ пулса тăчĕ.

Пĕтĕмпе вара паян районти пĕчĕк тата вăтам предприятисенче 2300 çын ĕçлет. Ку вăл район экономикишĕн вăй хуракан пĕтĕм йышăн 18 процентне пулать. Отраслсемпе илес пулсан, пĕчĕк бизнесăн 34 процентне суту-илӳ тата общепитлă апатлану сферине суйласа илнĕ, 30 процентне – ял хуçалăха, 17 процентне – промышленноçа, 11 процентне – строительствăна, тĕрлĕрен пулăшу паракан сферăна суйласа илнисем – 8 процент. Вăтам ĕç укçи 7100-7500 тенкĕпе танлашать. Ĕç укçин ыйтăвне районти ведомствăсем хушшинчи комиссиси куçран вĕçертмест. Хăйĕн икĕ ларăвĕнче чи пĕчĕк ĕç укçинчен кая ĕç укçи тӳленĕ 18 предприятие пăхса тухнă.

**(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).**

**Хресчен, çур аки шухăшлаттарать-и?**

**Колонкăсенче: 1. Хуçалăхсем. 2. Дизель çăвĕ çулталăклăх кирлĕ. 3. Паянхи куна пур. 4. А-76 маркăллă бензин кăçал валли пĕтĕмпе кирлĕ. 5. Паянхи куна пур.**

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 38 | 1,0 | 25 | 5,5 |
| «Волга» | 20 | 0,5 | 5,0 | 0,5 |
| «Восток» | 48 | 0 | 14 | 4,0 |
| «Герой» | 77 | 6,8 | 30 | 2,0 |
| Ильич яч. хис. | 140 | 23,0 | 40 | 1,0 |
| ВТМ | 10 | 0 | 2,0 | 0 |
| Ленин яч. хис. | 35 | 2,0 | 2 | 0 |
| «Моргаушская» | 100 | 43,7 | 60 | 19,4 |
| «Оринино» | 84 | 6,0 | 38 | 0 |
| «Передовик» | 60 | 0 | 15 | 0 |
| «Свобода» | 130 | 48,0 | 78 | 32,0 |
| «Сеятель» | 25 | 0 | 10 | 0 |
| Суворов яч. хис. | 100 | 16,0 | 3 | 0 |
| «Ударник» | 210 | 3,0 | 100 | 4,2 |
| «Хлебороб» | 5 | 0 | 2 | 0 |
| Чапаев яч. хис. | 60 | 3,0 | 10 | 0 |
| Чкалов яч. хис. | 60 | 32,0 | 15 | 0 |
| Мичурин яч. хис. | 20 | 3,0 | 0 | 0 |
| АПФ «Колос» | 15 | 0 | 2 | 0 |
| «Агросоюз Картофель» | 5 | 0 | 0 | 0 |
| «ВаСем» | 15 | 0 | 5 | 0 |
| «Акрамовское» | 10 | 0 | 5 | 0 |
| ДаАн | 10 | 0 | 5 | 0 |
| Районĕпе | 1277,0 | 188,0 | 466 | 68,6 |

**Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа 65 çул çитнĕ май**

## Уяв умĕн «Çав каччăшăн» ĕçлер

Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа 65 çул çитнине халалласа тунти кун ку енĕпе ĕçлекен йĕркелӳ комитечĕн ларăвĕ иртрĕ. Унăн ĕçне район пуçлăхĕ Ю. Иванов ертсе пычĕ.

Çак сумлă та чыслă уява районта тивĕçлĕ ирттерессипе ĕç пуçăннă ĕнтĕ. Вырăнсенче палăксене юсаса çĕнетес ĕçсем пыраççĕ. Акă çĕр типсе илсенех тирпей-илем кĕртессипе те ял тăрăхĕсенче, пур çурт-йĕр таврашĕнче те тимлеме тытăнĕç. Ял тăрăхĕсен тата шкул администрацийĕсен тачă çыхăнăвĕпе уяври пĕр ветеран та, пĕр тăлăх арăм та тимлĕхсĕр юлмалла мар. Кунсăр пуçне шкулсенче ветерансем çинчен калакан ятарлă стендсем хатĕрлес ĕç те пырать.

Паянхи куна пирĕн районта вăрçă ветеранĕсемпе инваличĕсем пурĕ 104 çын, вăрçăра упăшкисене çухатнă 19 тăлăх арăм. Вĕсен пурăнмалли условийĕсене тишкерсе кирлĕ пулăшу парасси районта малалла пырать. Тыл ĕçченĕсене те, вăрçă хыççăн мăшăрĕсем вилнĕ арăмсене те тимлĕхсĕр хăвармĕç.

Лару ĕçне пĕтĕмлетсе район пуçлăхĕ «Çав каччăшăн» ятпа ĕç вахтине йĕркелеме сĕнчĕ. Çакă ĕçлекенсен пĕр кунхи ĕç укçине вăрçă ветеранĕсемпе тăлăх арăмсене пулăшма хывни пулмалла. Сĕнĕве ырласа йышăнчĕç.

Укçа-тенкĕне вара çак реквизитсемпе куçармалла:

Получатель: Финансовый отдел администрации Моргаушского района (Администрация Моргаушского района, л/с 03123000012)

ИНН 2112001366 КПП 211201001

Р/с 40703810575143000018 в чувашском ОСБ 8613 г. Чебоксары

БИК 049706609 К/с 30101810300000000609

статус плательщика «08»

Код дохода 90330399050050000180

ОКАТО 97232835000

п. 1 (указать в назначении): в фонд помощи ветеранам ВОВ и вдовам погибших.

**Саламлатпăр**



Хаклăран та хаклă çыннăмăра, Çĕмĕрткасси ялĕнче çуралса ӳснĕ **Владимир Венедиктович МЕФОДЬЕВА** 50 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн, ăшшăн саламлатпăр. Ырлăх-сывлăх, телей, вăрăм кун-çул, ăнăçу сунатпăр. Санăн ырă кăмăлу, яланах пулăшма хатĕр пулни пире вăй-хал парать, çунат хушать.

Пурнăçу ăнса пытăр, мĕн ĕмĕтленни пурнăçлантăр.

**Саламлаканĕсем: çывăх тăванĕсем.**



Ырă кăмăллă аннене, юратнă асаннене, кукамая, пултаруллă йăмăка, хисеплĕ тăвана – Çĕньял Муркаш ялĕнче пурăнакан **Таисия Димитриевна ЛЕСКИНАНА** 70 çул тултарнă ятпа чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр.

Аннеçĕм, пире вĕрентсе пурнăç çулĕ çине кăларнăшăн çĕре çити пуç таятпăр. Тавах сана ырă кăмăлушăн, чун ăшшине пире парнеленĕшĕн. Эсĕ халĕ те пирĕншĕн ырă тĕслĕх пулса тăратăн, ăс парса пулăшса пыратăн, йывăрлăхсене çĕнтерсе малалла пурăнма вăй-хал парса тăратăн. Эпир яланах сан умра парăмра.

Ырă кăмăлпа, тулли те çирĕп сывлăхпа, пуян кĕрекепе, хисеплĕ çемйӳпе, мăнукусемпе тата тăванусемпе савăнса пурăнма Турри сана пулăшсах тăтăр. Тайма пуç сана пуриншĕн те. Эс пурри пирĕншĕн – пысăк телей.

**Пысăк салампа: ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕсем, мăнукĕсем, тăванĕсем.**

**Приглашает общественная приемная**

**С апреля 2010 года начинает свою работу общественная приемная представителя уполномоченного по правам ребенка в Чувашской Республике по Моргаушскому району Ванеркина Николая Григорьевича.**

**Прием граждан будет проходить каждый первый и третий четверг месяца с 13-00 до 15-00 часов по адресу: с. Моргауши, ул. Мира 9А, общественная приемная Всероссийской политической партии «Единая Россия». 3-14.**